Ĕçлес текен мелсем шырать

# Кӳршĕсенчен вĕренмелли çук мар

Паян килти тăвату стенаран тухса коллектив шанăçне тӳрре кăларма çĕнĕлĕхсене хăвăртрах алла илмесен, пĕр пус хурса икĕ пус илесси юмах кăна пулса юлать. Анчах урлă-пирлĕ пăхкаласан пирĕн хушăмăртах юмаха чăнлăха çавăракансем пурри курăнать. Харпăрлăх формисем улшăннипе улшăнманнине пăхмасăрах вĕсем ĕçлеççĕ, рынок аталанăвĕнчи шелсĕр конкуренцие хирĕç тăрайраççĕ, малта пыракансен ретне кĕреççĕ.

Пирĕн район администрацийĕ те халĕ каланă шухăша хăйĕн кулленхи ĕçĕнче мала хурса пырать. Акă район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов тата унăн çумĕ - ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев тимленипе утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче район аталанăвĕшĕн çунакан, хăйсен хуçалăхĕсене малалла аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшакан ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен пĕр ушкăнĕ ĕçлĕ çул çӳревпе Чул хула облаçĕнчи Спасски районти «Власть Советов» колхоза çитсе килчĕ. Унта ял хуçалăхĕ епле аталаннипе, аталану утăмĕсене çирĕп тума мĕн пулăшнипе паллашрĕ.

Ĕçлес текен мелсем шырать, ĕçлес тесех тăрăшсан шелсĕр рынок хутшăнăвĕсенче те мал туртăмлă аталанма пулать. Çапла пĕтĕмлетӳпе таврăнчĕç кӳршĕсем патĕнчен Суворов яч. хис., «Ударник», Чкалов яч. хис., Ильич яч. хис., Ленин яч. хис., Мичурин яч. хис., «Сеятель» хуçалăхсен ертӳçисем В. Андреев, П. Давыдов, П. Ефимов, И. Николаев, О. Яндимиркин, Б. Михайлов, А. Соловьев тата Мăн Сĕнтĕрти фермер хуçалăх ертӳçи В. Бархаткин.

«Власть Советов» хуçалăха юлашки 26 çулта Александр Васильевич Поваров ертсе пырать. Хуçалăх тĕш-тырă туса илессипе специализациленет. Ака лаптăкĕсен структуринче 2000 гектар кĕрхи культурăсем йышăнаççĕ. Тепĕр 2000 гектар – çуртрисем тата 1000 гектар нумай çул ӳсекен курăксем. Хуçалăхра таса пусăпа ĕçлесси, çĕре кантарасси тĕп вырăнта. Çак тĕллевпе колхозра çулленех 2000 гектар çĕре таса пусăна хăвараççĕ. Ăна тĕллевлĕ пăхса çу каçа 3-4 хутчен кăпкалатса çум курăкпе кĕрешеççĕ. Кĕр çитсен кĕрхи культурăсене агротехнологие пăхăнса вăхăтра акса хăвараççĕ.

Колхозра виçĕ уйлă пусă çаврăнăш. Пĕрремĕш çул – таса пусă, 2-мĕш çул – кĕрхи культурăсем, 3-мĕш çул – çуртрисем.

Улăмпа усă курасси те хуçалăхра хăйне евĕр пулса пырать. «Хир карапĕ» хыççăн юлакан улăм пĕтĕмпех хире вакланса юлать те пусăсене сухаламасăрах БДМ-6, КПЭ агрегатсемпе кăпкалатса тухаççĕ.

Тырă акнă тата калчасене апатлантарнă чух колхоз ĕçченĕсем минераллă удобренисен пĕтĕмĕшле комплексĕпе усă кураççĕ: нитроаммофоск пĕр гектар пуçне 120 килограмм, аммиак селитри те гектар пуçне 120 килограмм.

Акнă тырăна пăхса ӳстересси те «Власть Советов» колхозра çирĕп алăра. Кунта та агротехнологисене пăхăнасси тĕп вырăнта. Çавăнпа та акнă культурăсене калчалансан пĕтĕм лаптăк çинче гербицидпа пĕрĕхесси кунта йăлара. Çавăнпах анасем çумсăр, таса, кĕр çитсен те вырма irttерме çăмăлрах.

Тĕлĕнме кирлĕ мар, агротехнологие çирĕп пăхăнакан хуçалăх çулленех тыр-пул тухăçне гектар пуçне 50-60 центнер илет. Пирĕн районти хăш-пĕр хуçалăхсем 15 центнер илнине пăхсан камсен аталанăвĕ епле пуласси каламасăрах паллă. Пысăк тухăçлă тыр-пул туса илме агротехнологие пăхăннипе пĕрлех çĕнĕ техникăпа туслашни ĕçлени те çул уçса пырать. «Власть Советов» колхозра çакна пĕрремĕш çул мар асра тытаççĕ. Акă кăçал кăна колхоз ĕçченĕсем çăмăллатнă кредитпа 24 миллион тенкĕлĕх çĕнĕ техника туяннă.

Тыр-пул туса илнипе пĕрлех асăннă колхоз пĕрремĕш çул мар сĕт сăвассипе те специализациленет. Хуçалăхра 200 ĕне, иртнĕ çул пĕр ĕне пуçне вăтамран 6,5 пин литр чи пысăк пахалăхлă сĕт сунă. Кунта та сĕте сĕт провочĕпе сăвасси, ăна çителĕклĕ сивĕтесси малти вырăнта.

Ĕç укçи тивĕçлине кура колхозра ĕçлекен çынсем çителĕксĕррипе ыйту çивĕч тăмасть.

**А. ПАВЛОВ,**
**ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ, тĕп агроном.**

***РЕДАКЦИРЕН. Паянхи çак статьяпа эпир «Ĕçлес текен мелсем шырать» ятарлă рубрикăна çул уçатпăр. Çывăх кунсенчех çак рубрикăра эсир республикăри хуçалăхсем çĕнĕ техникăпа ĕçленине, Чăваш Енри «Комминтерн» (Хĕрлĕ Чутай районĕ), «Слава картофелю» (Комсомольски районĕ), Шуршăлти «Позитив», «Ленинская искра» (Етĕрне районĕ) тата Мари Республикинчи «Звениговский» хуçалăхсем çĕнĕлĕхсене алла илсе рынок экономикин авăрĕнче епле пурăннине вуласа пĕлĕр.***

Халăх сăнанинчен

# Июль – утă уйăхĕ

Пыл хурчĕсем çурăлнă пилеш çинче сĕрлеççĕ – ыран лайăх çанталăк пулать.

Кăткă йăви тавра кăткă нумай – лайăх çанталăка.

Эрешмен çĕнĕ кара тăвать – аван çанталăка.

Ирхине курăк типĕ – каçхине çумăр пулать.

Вăйсăр аслати – лăпкă çумăра, вăйлă аслати – витререн тăкакан çумăра.

Çанталăк пăсăлас умĕн пĕвери шыв шăрши вăйланать.

Ирхине шыв çийĕн тĕтре сарăлать – аван çанталăка.

Ял çыннисене пĕлме

# Фитофтороз

Çĕр улми ӳстерекенсене çак чир час-часах пысăк çухатусем тӳстерет. Вăхăтра имçамламан «иккĕмĕш çăкăр» çĕрĕкпе хиртех е ана çинчех юлать. Çакăнтан хăтăлас, лартса хăварнă çĕр улмие чирлеме парас мар тесен чир-чĕрпе кĕрешес ĕçе паян пурнăçламалла.

Çĕр улми тухăçлă культура пулнине пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем кăçал унăн лаптăкне ӳстерни те кăтартса парать. Районта унпа ĕçлеме опыт пурри лаптăксене татах ӳстересси пирки те иккĕленӳ çукки çинчен систерет. Анчах çĕр улми лаптăкĕсене ӳстернипе пĕрлех вĕсене чир-чĕртен, çумран сыхласси çине те тимлĕрех пăхасси пирки манмалла мар.

Юлашки вăхăтри çумăрсем çĕр улми çинче фитофтора чирĕ сарăлас хăрушлăха кăларса тăратрĕç. Унпа кĕрешме эпир паян «Ридомил Голд», «Ордан» препаратсем сĕнетпĕр. Вĕсемпе пĕрлех «Планриз» препарат та фиторăна хирĕç тăма пулăшать. Ку препарат пĕр вăхăтрах ӳсентăрансене ӳсме пулăшакан стимулятор та шутланать. Çĕр улмисĕр пуçне унпа апатлантарса купăстана пуç тытăнманран, сухана ир шураласран сыхлама пулать. Пахчари ытти культурăсемшĕн те «Планриз» хăйне евĕр усă сывлăш.

Çӳлте асăннă препаратсене пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем валли те, килти хушма хуçалăхсенче усă курма та Муркашра вырнаçнă «Россельхозцентрта» туянма пулать. Пирĕнпе çыхăнмалли телефон – 2-12-77. Хумхантаракан ыйтусемпе район администрацийĕн ял хуçалăх пайне кĕрсен те тĕрĕс хурав илме пулать. Кунти телефон: 2-14-15.

**А. СЕМЕНОВ,**
**«Россельхозцентр» ФПУĕн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалисчĕ.**

Республика кунĕнче чысланă ĕç паттăрĕсем çамрăксемшĕн тĕслĕх вырăнне

# «500 грамм çăкăршăн çур кун черетре тăраттăмăр», –

аса илет 60 çул каяллахине Николай Егорович Егоров (хăлха çивĕчех маррипе хытăрах калаçма ыйтса) хăйсем выçăллă-тутăллă пулнине пăхмасăрах пĕлӳ илессишĕн тăрăшнине палăртнă май куççуль юхтарса.

Турай ял тăрăхĕнчи Анаткасси ялĕнче пурăнакан Левиана Александровнапа Николай Егорович Егоровсене ку енче çеç мар, районта та, унăн тулашĕнче те пĕлекенсем чылай. Иккĕшĕ пĕрле шкулта 88 çул ĕçлесе вĕренекенсемпе вĕсен тăванĕсен асĕнче ыррине сахал мар хăварнă вĕсем. «Ятлă çыннăн ят юлать», – теççĕ халăхра обществăра ырăпа палăракан çынна тăрăшуллăхĕшĕн тав тунă май.

Акă Анаткассинчи пĕр енлĕ урампа пыратăп. Тăршшĕпех пĕр енлĕ мар вăл, анчах ытларах тĕлте симĕс кавирпе хупланнă урамăн пĕр енчи çырмаллă вырăнĕнче вăрман кашласа ӳсет. Унта кайăксен илемлĕ юрри тăрать. Урам хушшинчи машина йĕрĕсем те ĕлĕкхи урамсенчи лаша урапин çулне аса илтереççĕ кăна. Чылай ялти пек пылчăк лупашкисемпе трактор-машина хăварнă тарăн йĕрсем ку урамшăн мар. Урамăн çуррине бетон плитасенчен тротуар хуни те кунта тăван кĕтес илемĕшĕн тăрăшакан çынсем пурăнни пирки калать. Ытти çĕрти пек урампа иртекен кашни çын хыççăн йытă чупманни те ял илемне пуянлататать çеç.

Çутă симĕспе сăрланă, çивиттие хĕç тимĕрпе витнĕ, унăн карниза тухакан хĕррисене илемлĕ ӳкерчĕксем касса кăларса капăрлатнă, çут çанталăк газĕ кĕртнĕ, урамалла пĕчĕкçĕ илемлĕ крыльца тухса тăракан йывăç çурт тĕлне çитрĕм. Çакăнта пурăнаççĕ ĕнтĕ Муркашра ирттернĕ Республика кунĕнче халăх умĕнче ылтăн туйипа саламлă сăмахсене тивĕçнĕ ветеран-учительсем.

Пӳртелле иртетĕп. Ыранхи кунпа пурăнма хăнăхнă ватăсем паян та алă усса лармаççĕ, ăшă çу кунĕсемпе усă курса юсав ĕçĕсем ирттерме пăхаççĕ. Çакăнта хăйсене хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем пулăшасса шанаççĕ ашшĕпе амăшĕ. Çапах тĕп вăй хăйсенчех тесе шутлаççĕ-ха.

– Атте-анне килне юхăнтарас килмест. Колхозниксен 5 ачаллă çемйинче çуралса ӳсрĕм. Эпĕ 4-мĕшчĕ. Анчах çуратса ӳстерни те – йăлтах вĕсен шăпи, Тăван çĕршывăн йывăр çулĕсенчи шăпи. Вĕсем вара тачă çыхăнура.

–«Вĕрен. Вĕренсен çăкăр çиекен çын пулатăн», – тетчĕ атте мана хăй вăрçа каиччен те, фронтран çĕнтерӳпе таврăнсан та. Çак сăмахсем тĕрĕссине пурнăç кăтартса пачĕ. Шкулта вĕренекенсене та манаймасть. Нумайăшĕ таврăнаймарĕ вăрçă хирĕнчен. Кольăн та ашшĕпе аслă пиччĕшĕ Иван çĕршыв чĕнсен ăна сыхлама тăчĕç. Тав Турра, нумай терт-нуша курнăскерсем сывă таврăнчĕç вĕсем. Анчах ку каярахпа.

Хăрушă вăрçă çулĕсем тылра ĕçлекенсене те лăпкă-



тĕп ĕççене аслăраххисем тăвĕç тесе ларман. Вĕсенчен тĕслĕх илсе никам хушмасăрах ачаллах ĕçе хăнăхса пыма тиврĕ. Ĕçрен хăраманни вара пурнăçра каярахпа пысăк тĕкĕ пулчĕ. Тавах аттепе аннене тата пичче-аппасене кĕçĕн çулсенчех ĕçпе туслаштарнăшăн, – тет 60-70 çул каяллахине аса илме пуçласан Николай Егорович.

Ман умра ларакан ĕç ветеранĕсем иккĕшĕ те вăрçă çулĕсен ачисем. Çити-çитми пурнăç та, выçлăх та, ачаллах çĕр ĕçне кӳлĕнни те, йывăрлăхсене пăхмасăрах пĕлӳ çулĕпе утни те, çутă малашлăха шанса ачасем те, хамăн ачамсене те вăл каларăшпа пĕрре мар паллаштарнă. Хамăн вĕренкенсем тĕл пулсан паян çав сăмахсене аса илеççĕ те куççăран куççуль шăпăртатса юхса анать. Мĕн тăвас, ун чухнехи йывăрлăхсене епле çĕнтернине аса илсен чун лăпкăлăхĕ çухалать çав, – аса илӳ çăмхине малалла сӳтет Николай Егорович.

1941 çулта Анаткассинчи пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă арçын ача Советскинчи çар комиссариачĕ умĕнче вăрçа каякан арçынсем автомашина брезентне çĕтсе пуçĕсене кăларса тăванĕсемпе сывпуллашнине паян лăхра хăвармарĕç. Ватти те, вĕтти те яра кунах фронта пулăшассипе тăрăшрĕç. Коля та Турайри 7 çул вĕренмелли шкула вĕренме кĕрсен 6 класс хыççăн пĕр çул колхоза ĕçлеме кайрĕ. Унран тĕслĕх илсе ытти ачасем те хире тухрĕç. Тепĕр çулне вара Коля вĕренме шкула таврăнчĕ, анчах ĕнер унран тĕслĕх илнисем пĕрикĕ ача кăна каялла шкула пычĕç.

Ирех ĕçе кӳлĕнме тивнĕ çамрăкăн асĕнче икĕ пар лашапа суха туни, çур акире тырă акни, утă-улăм хатĕрлени, патшалăха тырă леçни ĕмĕрлĕх тымар ярса юлнă. Иккĕн ĕçлетчĕç пĕринче. Никандр мучи çĕнĕ ырашран пĕр пĕрчĕ тăварсăр-çусăр çур витре пăтă пĕçерсе пани, кунĕпе ĕçре пиçĕхнĕ ачасем каçхине лаша кĕтме улăха кайсан кăшт ыйхăласа илнĕ вăхăтра çĕрле тихана кашкăр вăрласа кайни – чĕрере тарăн йĕр хăварнă кунсем.

Вăрçă вĕçленсен те йывăрлăхсем тăруках иртмен. Юхăннă ял хуçалăхне ура çине тăратмалла. Малалла пăхаканăн вара вĕренмелле, çĕнĕ пĕлĕве алла илмелле.

– Пиччепе аппа хыççăн Етĕрнери учительсем хатĕрлекен училищĕне вĕренме кайсан киле çуран çӳрени – йăлана кĕнĕ пулăм. Пĕр кун çапла 30 километрлă çула килтен çунашка çине пĕр михĕ çĕр улми хурса тухсан çанталăк çул çинче тăрук шăнтма пуçласан пĕтĕм çĕр улми шăнса кайни тата çавна пула 2 эрне выçăллă, килтен парса янă çăкăра 6 пая пайласа куллен пĕр пай çисе пурăнни, ыттисем патне ашшĕ-амăшĕсем кучченеççемпе пырса çӳрени, çак вăхăтра эпĕ хам та аттене питĕ хытă кĕтни халĕ иртнĕ вăхăтра ĕнтĕ, – каллех куçне шăлса илчĕ мăшăрĕпе юнашар ларакан Николай Егорович.

Ашшĕ çартан таврăнсан хăйĕн патне пыма тухсан ăна Коля çул çинче тĕл пулать. Вĕсем хăйсен методисчĕпе шкула тĕрĕслев урокĕ ирттерме каятчĕç. Ашшĕпе тĕл пулсан А. Краснов методист фронтран кая юлса таврăнакан ашшĕне «Ывăлу ачасем умне тăма каять, уринче çăпата. Тăхăнмалли илсе парас пулать» тени тата çакăн хыççăн икĕ курс пĕтерсен 3 уйăх стипендийĕпе (480 тенкĕ) сăран атă илни Николай Егоровича нихăçан та лăплантараймасть.

– Вĕреннĕ вăхăтра киле килеймен эрнесенче пĕрле пурăнакан юлташăн кутамккинчи типĕтнĕ какай шăршине туйма, анчах хăвăн шăл айне хума нимĕн те çуккине тӳсме ытла та йывăрччĕ, – пĕрле пĕр класра вĕреннĕ мăшăрĕ çине пăхса куççульне шăлать ĕç ветеранĕ.

Николай Егорович 1948 çултанпа ачасене вĕрентес ĕçре. 1957 çултанпа вăл 36 çул пĕр улшăнмасăр хăйсен тăрăхĕнчи Тушкассинчи пуçламăш шкулта вăй хурать. Вăл ĕçленĕ çулсенче кунти шкулăн çĕн çурчĕ хута каять, шкул илемлĕхпе хăтлăх виçине илет.

Училищĕ пĕтерсен икĕ енелле хăйсен çулĕпе кайнă Николайпа Лениана 1958 çулта тĕл пулса 5 минут калаçаççĕ те каччă çине çинех хĕр патне 4 çыру çырать. Хуравĕ пĕрре пулать. Татах 4 çыру, татах пĕр хурав. Майăн 1-мĕшне уявлама Каршлăха чĕнсен Коля вăтанса тăмасть, уяв каçне васкать. Лениана Александровна Климентова вăл çулсенче Каршлăхри санаторире ĕçленĕ, ачасене хутла вĕрентнĕ (каярахпа вăл учитель ĕçне Тушкасси шкулĕнче те пурнăçланă, Анаткассинчи пуçламăш шкула ертсе пынă чух та ĕçе хăй еккипе яман). Уяв каçĕ хыççăн Николай Лианăсен ашшĕ-амăшне шыраса тупса хĕре качча илесси пирки калаçать.

– Манпа канашламасăр кун пек тума епле хăйрăн? – ыйтать каччăран хăйне вăл çакăн пирки пĕлтерсен.

– Эпĕ шантăм тата шанатăп, – пулать хурав 28 çулхи каччăн. Çав çулхи Питравра вĕсем пĕр-пĕрне шанса та юратса анлă туй кĕрлеттерчĕç.

Унтанпа 50 çул хыçа юлчĕ. Лениана Александровнапа Николай Егорович Егоровсем çак çулсенче çĕршыв малашлăхне шанса 6 хĕр çуратса ӳстерчĕç, кашнинех тӳрĕ пурнăç çулĕ çине тăратрĕç. Паян вĕсен хăйсен çемйисем, ӳсĕмĕсем. Асаттепе асаннен халĕ çемйи татах пысăк. Кĕрекери 6 хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 13 мăнукĕ тата вĕсен 3 ачи – Егоровсен çемье йывăççин илемлĕ çимĕçĕсем.

Ырă ĕç мар-и-ха Егоровсен пурнăçĕ? Хирĕçле хурав çук.

**А. БЕЛОВ.**